# Ĕç – пурнăç никĕсĕ

## Йывăрлăхсене çĕнтерме патшалăх пулăшать

***Иртнĕ çулхи декабрĕн 31-мĕшĕнче республикăри Министрсен Кабинечĕ «2009 çулта Чăваш Республикинче пурăнакансене ĕçпе тивĕçтерессипе хушма пулăшу парасси çинчен тĕллевлĕ республика программине çирĕплетесси çинчен» 418 № йышăну кăларчĕ. Унпа килĕшӳллĕн ĕçсĕрлĕхе асăрхаттарма тата ĕçсĕр юлнисене пулăшма анлă мероприятисем палăртнă.***

***Çак программа виçинче районта та чылай пĕлтерĕшлĕ ĕç туса ирттернĕ. Кун пирки каласа пама районти ĕçпе тивĕçтерекен центр ертӳçине Т.А. АНТОНОВАНА чĕнтĕмĕр.***

- Çӳлерех асăннă йышăнăва тĕпе хурса, - палăртрĕ Тамара Афанасьевна, - эпир виçĕ тĕп çул-йĕрпе ĕçлесе пыратпăр:
- çынсене обществăлла ĕçе явăçтарасси,
- вăхăтлăх ĕçе вырнаçтарасси (ĕç вырăнĕсемпе тивĕçтересси),
- ĕç опычĕ пухма стажировкăна ярасси.

Çак тĕллевсемпе района субсиди 12 миллион та 16 пин тенкĕ уйăрнă. Куратăр ĕнтĕ, пĕчĕк укçа-тенкĕ мар. Апла пулсан унпа тивĕçлипе те кирлĕ пек усă курмалла. Ку енĕпе эпир тимлесех ĕçлетпĕр.

Çак укçа-тенкĕпе пирĕн 733 ĕç вырăнĕ йĕркелемелле, тепĕр майлă каласан, 733 çынна ĕçе вырнаçтармалла.

Халĕ çӳлерех асăннă 12 миллион та 16 пин тенкĕне епле валеçни çинчен чарăнса тăрам.

Патшалăх предприятийĕсенчи çынсене ĕçпе тивĕçтерме 743 пин те 737 тенкĕ уйăрнă. Кунта «ДЭП-145» тата «Ударник» кĕреççĕ. Хальлĕхе 394 пин те 700 тенкине тăкакламан.

Хуçалăх расчечĕ çинче ĕçлекен предприятисене пулăшма 2 миллион та 848 пин те 700 тенкĕ уйăрнă. Пĕтĕм укçипе усă курнă. Сăмах кунта, тĕпрен илсен, колхозсем пирки пырать. Çынсене вĕсенче çурхи уй-хир ĕçĕсене, выльăх-чĕрлĕх фермисемпе кĕлетсене юсама явăçтарнă, 2-шер тата 1-ер уйăх ĕçлеттернĕ.

Бюджет организацийĕсене пулăшу кӳме 1 миллион та 68 пин те 462 тенкĕ уйăрнă. Уйăрнă укçа-тенкĕпе пĕтĕмпех усă курнă.

Предпринимательсене пулăшма та укçа-тенкĕ панă. Ку тĕллевпе 145 пин те 60 тенкĕ уйăрнă, пĕтĕмпех усă курнă.

Çапла вара çынсене вăхăтлăха ĕçе вырнаçтарма 4 миллион та 805 пин те 960 тенкĕ уйăрнă. 394 пин те 700 тенкисĕр (патшалăх предприятийĕсен тӳпи) пуçне ытти укçи-тенкипе усă курнă. Юлнине çулталăк вĕçлениччен тăкаклатпăр.

Августăн 13-мĕшĕ тĕлне çӳлерех асăннă субсидисемпе пĕтĕмпе 819 çынна ĕçе вырнаçтарнă тата ăсталăха ӳстерме янă. Çав шутра:
- вăхăтлăх ĕçе вырнаçтарнă – 532 çынна,
- обществăлла ĕçе явăçтарнă – 252 çынна,
- стажировкăна янă – 35 çынна.

Уйрăмах йышлă ĕç вырăнĕ йĕркелеме пулăшу панă предприятисене илсе кăтартас килет: «Сеспель» предприятире 170 çынна, «Волгодорстрой» акционерлă обществăра 50 çынна вăхăтлăха ĕçе вырнаçтарнă, «Автодорсервис» обществăра – 42 çынна, «Моргаушская» МСО-ра – 40 çынна, «ДЭП-145» предприятире – 37 çынна, «Свобода» хуçалăхра – 36 çынна, Ильич ячĕпе хисепленекен хуçалăхра – 36 çынна, «Герой» хуçалăхра – 36 çынна, «Муркашри автомобильпе техника сервисĕ» обществăра – 32 çынна, Чапаев ячĕпе хисепленекен хуçалăхра – 30 çынна, Е.Андреев ячĕпе хисепленекен хуçалăхра – 20 çынна, «Ударникра» – 18 çынна, Чкалов ячĕпе хисепленекен хуçалăхра – 16 çынна.

Бюджет учрежденийĕсенче лару-тăру çапла: районти тĕп больницăна 11 çын вырнаçтарнă, вĕрентӳ учрежденийĕсене – 123 çын, ял тăрăхĕсен администрацийĕсене – 80 çын.

Районта çак кунсенче тепĕр 7 миллион тенкĕ килсе çитрĕ. Ăна палăртнă тĕллевсемпе тăкаклăпăр.

## Ăста специалист



***Нина Геннадьевна Сафиулина районти ĕçпе тивĕçтерекен центрта ертсе пыракан инспекторта вăй хурать. Ăста специалист, ĕç опычĕ те пысăк унăн.***
***Сăн ӳкерчĕкре: Нина Геннадьевна центра пыракансемпе яланах тимлĕ.***

## Ĕç шыраса – тепĕр региона

Паян халăх пĕр вырăнтан тепĕр вырăна куçасси анлă сарăлчĕ. Пĕрисем яланлăхах тухса каяççĕ. Ытларахăшĕ вара вăхăтлăх ĕç шыраса çула тухать. Кунта тивĕçтерекен ĕç вырăнĕ çук пулсан, ăна тепĕр вырăнта та тупма пулать паян.

Кун пек çынсене валли «Вăхăтлăх е яланлăх ĕçе вырнаçма урăх вырăна куçса каякан граждансене адреслă пулăшу парасси» программа йышăннă. Кăçал çак тĕллевпе 272 пин те 820 тенкĕ уйăрнă. Кăмăл пуррисене Мускав облаçĕнчи ял хуçалăх отраслĕнче 5 ĕç вырăнĕ кĕтет.

## Ĕçсĕр юличчен çĕнĕ професси алла илетпĕр

Чăваш Республикинчи халăха ĕçпе тивĕçтерекен патшалăх служби ĕçсĕр тăрса юлма пултаракан çынсене çĕнĕ профессие вĕрентессине те йĕркелет. Района валли ку тĕллевпе 219 пин тенкĕ уйăрнă. Çак çăмăллăхпа паян «Сеспель» предприятире усă кураççĕ. Кунти 20 çынна слесарь, фрезеровщик, электромонтер, наладчик профессие вĕрентеççĕ. Хыççăн вĕсене «Шупашкарти авторемонт завочĕ» акционерлă обществăна вырнаçтарма палăртаççĕ.

## Çулталăк вĕçлениччен пулăшу тата пулать

Ĕçсĕр юлнă граждансене пулăшма республика правительстви çулталăк вĕçлениччен тата укçа-тенкĕ уйăрма палăртать.

Çак проектпа килĕшӳллĕн (хальлĕхе ăна йышăнман) района 241 çынна ĕçе вырнаçтарма 4 миллион та 200 пин тенкĕ уйăрса параççĕ. Çав шутра шкулсенче 56 çынна вырнаçтарма 975 пин те 800 тенкĕ, Каршлăхри ваттисен çуртĕнче 5 çынна ĕçе вырнаçтарма 87 пин те 100 тенкĕ, районти тĕп больницăра 8 çынна вырнаçтарма 139 пин те 400 тенкĕ, «Моргаушкорм» обществăра 10 çынна ĕçлеттерме 174 пин те 200 тенкĕ.

Ял хуçалăх предприятийĕсенче 162 ĕç вырăнĕ йĕркелеме палăртнă. Çак тĕллевпе 2 миллион та 800 пин тенкĕ уйăрĕç.

## Паян - ĕçсĕр, ыран - предприниматель

Ĕçсĕррисен йышĕнчен предприниматель пулас шухăшлисене те эпир пулăшма тăрăшатпăр. Кăçал ку таранччен 4 çынна хăйсен ĕçне йĕркелеме майсем туса патăмăр. Кашнинех 58 пин те 800 тенкĕ уйăрнă.

Мăн Сĕнтĕрти Алексей Игоревич Маринкин çăм таптарас ĕçе пуçарса ячĕ. Ял çыннисем çакăнпа кăмăллă. Кирлĕ ĕç.

Юнкăри Владислав Тимофеевич Маряшкин хресчен фермер хуçалăхне йĕркелесе ӳсен-тăран продукцине туса илессипе тимлет. Ку тăрăхра пушă çĕрсем нумай.

Çĕньял Апашри Валерий Николаевич Семенов вăрлăхлăх çĕр улми туса илессипе ĕçлет.

Хальлĕхе ку тĕллевпе укçи-тенки района çитмен пулин те каласа хăваратăп. Хăйсен ĕçне йĕркелеме пултаракансем валли тата 1 миллион та 764 пин тенкĕ килмелле. Çапла вара тата 30 ĕçсĕр çын хăй ĕçне йĕркелеме пултарĕ.

Хăйсене ĕçпе тивĕçтерес текенсен бизнес-план е техникăпа экономика никĕсĕ хатĕрлемелле. Мĕнле усăллă ĕç йĕркелесшĕн вĕсем? Çак тĕп ыйту çине хурав памалла. Документсене хатĕрлеме районти бизнес-центр пулăшать.

Çулталăк хушшинче çĕнĕ предпринимательсен хăйсем тунă тăкаксене çирĕплетме касса чекĕсене, тавар чекĕсене пуçтарса пымалла. Договор хучĕсене те упрамалла. Çулталăк хушшинче пирĕн пата очетпа килмелле пулать.

Хăйсен ĕçне пуçлама хăраманнисене районти ĕçпе тивĕçтерекен центрта хапăл туса йышăнатпăр.



***Çĕньял Апашри В.Н. Семенов (сăн ӳкерчĕкре) хăй вăхăтĕнче инженер-механик специальноçне алла илнĕ. Çĕр улми туса илессипе те пĕрремĕш çул мар вăй хурать. Çĕрĕ те унăн çителĕклĕ. Паян вăл 1 гектар çĕр çинче ĕçлет. Кăçалтан тата тепĕр 5 гектар лаптăка ĕçе кĕртесшĕн.***

***Валерий Николаевич ир пулакан тата вăтам ир пулакан çĕр улми сорчĕсем тупăшлине палăртать. Ана çинчен кăларса тӳрех сутать вăл çĕр улмине. Кашни килограмне малтанласа 12 тенкĕпе вырнаçтарма пултарнă.***

***Çĕнĕ сортсене те тĕрĕслесе пăхать. Кăçал акă «Шар» сорт лайăх тухăç панине палăртать.***

***– Ачасемпе, мăнуксемпе пĕрле ĕçлетпĕр, – каласа парать Валерий Николаевич. – Вĕсене валли пултăр. Вĕсем ĕçе хăнăхса ӳсчĕр.***

***Эпир пынă чухне те вăл çĕр улми пуссинче Оля ятлă мăнукĕпеччĕ.***

***– Мана ялта çав тери килĕшет, – чăвашла таса калаçать хуларан килнĕ Оля мăнукĕ, – эпĕ асаттене юрататăп.***

## Куршанак çыпăçать

Граждансене ĕçпе тивĕçтерме пирĕн ведомство хатĕрленĕ тĕллевлĕ программа та пур. Вăл «Чăваш Республикинче пурăнакансене 2007 – 2010 çулсенче ĕçпе тивĕçтерме пулăшасси» ятлă. Ăна ЧР ĕçпе тивĕçтерекен патшалăх службин 2007 çулхи мартăн 28-мĕшĕнче 53 № приказĕпе çирĕплетнĕ.

Çак программа шучĕпе района сахал мар пулăшу уйăрнă.

14 – 18 çулсенчи 652 ачана вăхăтлăх ĕçе вырнаçтарма 331 пин тенкĕ субвенци панă. Августăн 1-мĕшĕ тĕлне 329 ачана тĕрлĕ ĕçе явăçтарнă.

Ачасем хаваспах палăксен таврашне тирпейлеме, территорисене çӳп-çапран тасатма, шкулсенчи юсав ĕçĕсене ирттерме хутшăнчĕç. Халĕ вĕсем шкулсем çумĕнчи хушма хуçалăхсенче вăй хураççĕ.

Çак кунсенче Оринин, Çатракасси, Ярапайкасси шкул участокĕсенче, унччен Юнкă, Чуманкасси, Калайкасси, Муркаш шкулĕсенче ĕçленĕ ачасене укçа тӳлерĕмĕр.

Шкулсенче çакăнпа ĕçсем вĕçленмеççĕ-ха. Кĕçех ачасем çĕр улми кăларнă çĕре хутшăнĕç. Хыççăн йывăçсем лартма тухĕç.

## Килте ларни мар

Обществăлла ĕçе явăçтарасси çине те юлашки çулсенче пысăк тимлĕх уйăрма пуçларăмăр. Ку тĕллевпе района кăçал 97 пин те 800 тенкĕ килнĕ. Пĕтĕмпе 111 çынна ĕçе явăçтармалла пулнă. Палăртнине пурнăçланă. Çынсем ытларах бюджет учрежденийĕсенче ĕçленĕ. Тĕрлĕ хут ĕçĕсене пурнăçланă. Ĕç çук чухне ку та пулăшу.

Ĕç тупма уйрăмах йывăр граждансене пулăшма 5200 тенкĕ уйăрнă, 3 çынна архива вăхăтлăха вырнаçтарнă.

Хăйсене ĕçпе тивĕçтерессине йĕркелеме 1000 тенкĕ уйăрнă, 2 çын сутуçă тата парикмахер свидетельствине илнĕ.

15 çынна вĕрентме 8600 тенкĕ уйăрнă, хальлĕхе 12 çынна вĕрентсе кăларнă.

## Вĕренсе çĕнĕ професси илме нихăçан та кая мар

Пурнăç паян хăвăрт улшăнать. Ĕç рынокĕ те çакна аван туять. Паян пĕр професси çыннисем кирлĕ пулсан, тепĕр тапхăртан пачах урăх професси çыннисене ыйтаççĕ.

Çавăнпа çӳлерех асăннă ведомство программипе çынсене çĕнĕ профессие вĕрентме 506 пин те 500 тенкĕ палăртнă. Пĕтĕмпе пирĕн кăçал 60 çынна професси памалла. Хальлĕхе 30 çынна вĕрентсе кăларнă.

Çĕнĕ професси илес текенсене нумай çăмăллăхсем кĕтеççĕ. Вĕсене стипенди тӳлеççĕ. Çул çинче çӳрекенсене тăкаксене саплаштараççĕ. Кирлĕ пулсан общежитие пурăнма вырнаçтараççĕ.

Ĕçпе тивĕçтерекен центр ĕçсĕррисене профессие панăшăн вĕрентӳ учрежденине те тӳлет.

Вĕренес текенсене кашни уйăхрах ярса тăратпăр.

Кунта çакна та каласа хăварасшăн. Вĕренекенсене стипенди тӳлеме района 220 пин тенкĕ уйăрса панă. Хальлĕхе эпир 87 пин те 300 тенкипе усă курнă.

Унсăр пуçне çынсене профориентаци пĕлĕвĕ илме те пулăшатпăр. Ĕçе епле вырнаçмалла? Ĕçе епле шырамалла? Çакăн йышши клубсене пĕлӳ пухма пирĕн кăçал 40 çынна ямалла. Пĕтĕмпе çак тĕллевпе 25 пин те 400 тенкĕ тăкаклама палăртнă. Хальлĕхе 30 çын хăйсен пĕлĕвне ӳстерсе таврăннă та ĕнтĕ.

## Ĕçсĕррисене пособи тӳлеççĕ

Кăçал ĕçсĕр çынсене пособи тӳлеме 4 миллион та 190 пин тенкĕ уйăрнă. Хальлĕхе 2 миллион та 788 пин тенкĕ тӳленĕ.

Уйăхсерен паракан пособи виçисем тĕрлĕрен пулаççĕ. Унăн виçи ĕç укçин виçинчен килет. Пособи вăтамран ĕç укçин 75 процентне танлашать. Чи пысăк пособи – 4900 тенкĕ. Ĕç вырăнĕнчен учета тăратнисене пособи 1 çулталăк хушши тӳлеççĕ.

Чи пĕчĕк пособи – 850 тенкĕ. Ăна унччен ĕçлеменнисене тӳлеççĕ. Кун пеккисене учетра 6 уйăх хушши çеç тытаççĕ.

## Икĕ çул маларах пенсие кăлараççĕ

Предприятире е учрежденире ĕç вырăнне чакарсан ĕçлекене вăхăт çитичченех пенсие яма пултараççĕ. Паллах, урăх ĕç тупаймасан. Хĕрарăмăн кун пек чухне 53 çулта, арçыннăн 58 çулта пулмалла.

Çак тĕллевпе района 426 пин те 100 тенкĕ уйăрнă. Хальлĕхе пĕтĕмпе 224 пин те 400 тенкине тӳленĕ.

Кăçал çул çитиччен 6 çынна пенсие кăларнă. Пĕтĕмпе çак пенсие районти 11 çын илсе тăрать. Çулталăк вĕçлениччен тата тепĕр çынна пенсие яратпăр.

## Ĕçсĕрлĕх шайĕ – 0,84 процент

Районти ĕçпе тивĕçтерекен центрта августăн 1-мĕшĕ тĕлне учетра 185 çын тăрать. Ĕçсĕрлĕх шайĕ 0,84 процентпа танлашать.

Кăçал 914 çынна учета тăратнă, çав шутра - 329 ача.

Ĕçе 632 çынна вырнаçтарнă.